## *Риф Сафиуллин:*

**Пурнăç йĕрĕ**

# "Эпир çĕр пуянлăхне чунтан парăнмалла"



*Риф Ахтямович Сафиуллин - "Нурлатнефть" НГДУ тĕп инженерĕ. Павлă районĕнчи Салкын Чишма ялĕнче (халь Ютази районне кĕрет) çуралнă. Каракашлинскири вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Совет Çар службине иртнĕ хыççăн нефтяникра ĕçлеме пуçланă. Альметьевск хулинче вăй хунă май Мускаври нефтьпе хими институчĕн каçхи филиалĕнче вĕреннĕ. 1977 çулта "Ямашнефть" НГДУ промыслин начальникне лартнă, унтан "Нурлатнефть" НГДУн инженерĕсемпе техникĕсен службин ертӳçи пулма куçарнă. 1988 çулта тĕп инженера лартнă. Çирĕп дисциплина, тĕрĕс шухăшласа ĕçлеме пĕлни, пултаруллă та компетентлă ертӳçĕ - Р.А.Сафиуллинăн профессионализмĕпе ăсталăхне сăнласа паракан тĕп пахалăхсем.*

*Ĕçре пысăк ăнăçлăхсем тунăшăн ăна "Нурлатнефть" НГДУпа "Татнефть" акционер обществин ертӳçисем Хисеп грамотисемпе наградăланă. Вăл вун-вун рационализаци сĕнĕвĕн авторĕ.*

*Çак кунсенче ăна "Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ нефтяникĕ" хисеплĕ ят панă.*

Нефтяник пулма вăл ăнсăртран çеç шухăш тытман, ку тĕплĕн шухăшланă утăм пулнă. Вăтам шкула вĕренсе пĕтерсен, ял каччи Хусанти ял хуçалăх институчĕн механика факультетне вĕренме кĕрет: тен, ĕмĕр тăршшĕпе платник пулса вăй хунă ашшĕ хистенипе-ши, тен, тăван ялĕн лăпкă пурнăçĕ килĕшнĕ-ши. Анчах та I курс пĕтернĕ хыççăн салтака кайса килсен, вăл хăй суйлавне тепĕр енчен хак парать.

- Вăл вăхăтра хуçалăхсенче вырьăхчĕрлĕх те, техника та сахалччĕ, хресченĕн хăйĕн çĕрĕ те пулман. Ял хуçалăхĕн аталанмалли малашлăх курăнман.

Анчах шăп çак тапхăрта Тутарстанта, уйрăмах унăн тăван енче, нефть отраслĕ анлă сарăлма пуçланă. Паллах ĕнтĕ, çамрăк, вăйлă каччă романтика илĕртмесĕр пултарайман. Тепĕр енчен вăл нефтяник профессин малашлăхне те уççăн курнă. Анчах та Мускаври института кăнтăрлахи уйрăма вĕренме кĕрес тенĕ ĕмĕтпе ăна пурнăçри лару-тăрăва пула сывпуллашма тивнĕ. Унăн нефтьçĕн ĕç биографийĕ "Альметбурнефтьрен" пуçланнă. Малтанах пăралуçа пулăшакан пулнă, кайран оператор... Анчах та ĕç мĕнле йывăр пулсан та вĕренес шухăш ăна канăç паман, çавăнпа та ĕç хыççăн каçпа Мускаври нефтьпе хими институчĕн Альметьевскри филиалне васканă. Риф Ахтямович Альметьевска ăна пурнăçа путевка панă хула тесе шутлать.

- Альметьевск хăйĕн паллă çыннисемпе палăрса тăрать. Эпир çамрăк чухне партком секретарĕ пурччĕ - Наиля Гилязева (халь вилнĕ). Тĕлĕнмелле çирĕп кăмăллă çынччĕ. Шăпах вăл пире Тутарстан нефтĕн малашлăхĕ валли пысăк пĕлӳллĕ, пултаруллă специалистсем кирлĕ тесе малалла вĕренме хавхалантаратчĕ. Пирĕн бригадăри çынсем, пурте тенĕ пекех, вĕренеттĕмĕр. Манăн юлташсенчен чылайăшĕ пысăк вырăнсенче ĕçлеççĕ. Альметьевск хальхи вăхăтра нефть профессионалĕсен тĕп вырăнĕ пулнинче çак хĕрарăмăн тӳпи те пур тесе шутлатăп. Паллах ĕнтĕ, мана кăна мар, ыттисене те хăй вăхăтĕнче çак вырăнсене, пĕлӳсемпе опыт пухнă центра пăрахса кайма питĕ йывăр пулчĕ.

* * *

Тĕп инженерăн Р.А.Сафиуллинăн пурнăçĕ, шăпи Нурлатри нефтьпе газ кăларакан управленин историйĕпе, ĕçĕпе тачă çыхăннă. Управлени йĕркеленнĕ пĕрремĕш кунĕсенчен тытăнса халиччен пурнăçланă ĕçсенчен чылайăшне вăл хутшăннипе тунă. Хальхи вăхăтра предприятин шанчăклă тĕрекĕ пулса тăракан кадрсене, опытлă нефтьçĕсене воспитани парса хатĕрлес ĕçе те вăл вăй хунă.

Ĕç çинчен каласан, кунта вăл çирĕп, хытă ыйтакан ертӳçĕ, теççĕ ун çинчен, çав вăхăтрах уçă кăмăллă, тимлĕ, хăйĕн çыннисемшĕн тăрăшать, пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Журналистпа калаçнă чухне вара хăй çинчен сăмах ваклама юратманни сисĕнчĕ. Çав вăхăтрах хăйĕн лайăх енĕсемпе начаррисене пытармасть, хăйĕн пек пулма пĕлет. Çавăнпа та унăн ячĕ управлени коллективĕнче çеç мар, хулара та авторитетлă.

- Ĕçлекене хисеплеççĕ, теççĕ пирĕн. Вăрттăнлăх çакăнта пуль, - тесе шутлать Риф Ахтямович. - Нефтяник пурнăçĕ - вĕçĕхĕррисĕр йывăр ĕç. Эпир тăрăшнин кăтартăвĕ нефть кăна мар вĕт. Нурлат хули аталаннинче, çынсен социаллă пурнăçĕпе йăла условийĕсем лайăхланнинче те чи малтан НГДУн тӳпи пур. Коммуналлă хуçалăх-и, строительство-и - пурте нефтяниксемпе çыхăннă, вĕсенчен чылайăшне эпир пулăшнипе пурнăçлаççĕ.

Эпĕ хушнине итлекен çынсене хисеплетĕп. Пĕр шутласан, эпир пурте кама та пулин пăхăнса тăратпăр. Çавăнпа та шанса панă ĕçе тĕплĕ пурнăçлани - пирĕн тĕп тивĕç. Пултараймасан çакна йышăнма пĕлмелле. Тимсĕрлĕхе, çăмăлттайлăха, сӳрĕклĕхе вара эпĕ кăмăлламастăп.

Нумаях пулмасть ăна тăванĕсем, юлташĕсем 50-çулхи юбилейпе саламларĕç. "Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ чикке çитнĕ çын мĕнле тĕллевпе пурăнать-ха?" Ку ыйту çине вăл питĕ ĕçлĕ хурав пачĕ.

- "Татнефть" акционер обществинче пирĕн НГДУ нефть кăларассипе 4-5-мĕш вырăн йышăнать. Пирĕн тĕп тĕллев эпир тата та ăнăçлăрах ĕçлеме, мала тухма пултарнине кăтартасси. Ура çинче çирĕп тăракан, рентабеллĕ предприяти пулма вăхăт çитрĕ. Çак тĕллевпе чылай ĕç пурнăçлатпăр, тĕп мероприятисем хушшинче нефть уçлама хатĕрлекен çĕнĕ оборудовани вырнаçтарасси. Хальхи вăхăтра çак участока тĕп тимлĕх уйăратпăр.

... Тĕп инженерта вăй хума пуçлани 10 çул, çемьеллĕ пурнăçпа пурăнма тытăнни 25 çул - çак датăсем кăçал Р.А.Сафиуллинăн юбилей эстафетине малалла тăсĕç. Çемье çинчен ыйтнине Риф Ахтямович хăйне кăшт критиклесе çапла хуравларĕ:

- Хама эпĕ ĕçе халаллатăп. Çулсем начар вăхăтра икшер эрне килте пурăнманни те пулнă. Мăшăра, Роза Рашидовнана килти хуçалăха тытса пыма пулăшма вăхăт сахалтарах юлать çав.

Риф Ахтямович кукаçей пулнă ĕнтĕ. Ĕç графикĕ мĕнле çирĕп пулсан та вăл хăйĕн мăнукĕ Ахтям валли вăхăт тупать. Ăна часчасах тĕп инженерăн ĕçри машини çинче курма пулать. Паянах ăна нефтяникăн йывăр, анчах та хисеплĕ шăпине хатĕрлет пулас. Анчах малашне вăхăт хăйех кăтартĕ.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

# Пачăшкă сăмахĕ

Çак çурхи кунсенче Православи чиркĕвĕ Аслă типпе паллă тăвать, паллах ĕнтĕ, ăна, Аслă çутă уява, урăхла каласан, Сăваплă Мăнкуна халалланă. Таса чиркӳ унта çӳрекенсене çак сăваплă уява ӳт-пӳ тата ăстăн енчен тасалса кĕтсе илме хушать. Типĕре апат типĕ пулмалла, урăхла каласан, аш, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ, сĕт-турăх, çăмарта çиме юрамасть. Анчах та ку чи кирли марха. Чи пĕлтерĕшли вăл - ăстăн типпи: христос тĕнне ĕненекен типĕ вăхăтĕнче пĕр хутчен те пулин кĕлĕре пулмалла.

Типĕ тытнă эрнере каçхи тата ирхи кĕлĕсенче тăмалла, илĕртӳллĕ пурнăçран пăрăнма тăрăшмалла, çывăх çынсене кӳрентернине, çылăха кĕнине аса илсе, май пур таран лăпкăрах пурăнмалла, турă умĕнче каçару ыйтмалла тата турă юнĕ сыпмалла.

Турă юнне сыпиччен типĕ тытассине уйрăмах çирĕп пурнăçламалла, турă юнĕ сыпмалли кун шыв та, эмел те ĕçмелле мар.

Типĕ тытнă кунсенче савăнтаракан заведенисене кайма юрамасть, телевизорпа кăтартакан программăсене сахалрах пăхнипе тата радио итленипех çырлахмалла. Тахçан 1917 çулччен Раççейре Аслă типĕ кунĕсенче театрсем, ресторансем, цирксем ĕçлемен. Çынсем Турăран каçару ыйтнă, хăйсен шухăшĕсене пурне те Турра пĕлтерне. Аслă типĕ вăхăтĕнче тĕне ĕненекен кашни çыннăн Иисус Христоспа пĕрле унăн асаплă çулне утса тухас тесе сăваплă Евангелие вуласа тухмалла.



Пирĕн Серафим Саровски чиркӳ чугун çултан инçех мар вырнаçнă. Кунта çӳрекенсем валли пирĕн чиркӳ алăкĕсем эрнекун, шăматкун тата вырсарникун яланах уçă. Кĕлĕ тума, пуççапма, ӳкĕнме, турă юнĕ сыпма кăмăл пуррисем пурте пыма пултараççĕ. Пырăр, чиркӳре пулнă хыççăн эсир хăвăра çăмăлрах туйăр. Сирĕн чун-чĕрĕр те курайманлăх туйăмĕнчен тасалĕ. Аслă типĕ кунĕсенче чи кирли - хăвăн çывăх çыннуна каçарасси, çаплах ăна кӳренӳсене манма пулăшасси. Пулăшу кирлисене пурне те пулăшма тăрăшмалла. Ку вăл - пирĕн Иисус Христос Туррăн тĕп халалĕсенчен пĕри.

Пирĕн районти хуларан инçех мар вырнаçнă Якуркел, Уксăмлă, Пухтел тата ытти ялсенче пурăнакансене пирĕн чиркĕве пыма чĕнсе калатăп. Эпир сире сăваплă чиркӳре тĕне ĕненекенсене мĕнле кĕтсе илмелле, çавăн пек кĕтсе илĕпĕр. Уйрăмах тĕне ĕненекен чăвашсене чĕнсе калатăп: пирĕн Чиркӳре эсир тĕп кĕлĕсене тăван чĕлхепе чăвашла илтме пултаратăр. Çаплах эсир кунта тĕне кĕме, венчете тăма, вилнисемпе сыввисемшĕн кĕлĕ тутарма пултаратăр.

Эпĕ çаплах тĕне ĕненменнисене пирĕн пата пыма чĕнетĕп. Унта пырса Чиркӳ ырă кăмăллă пулма кăна вĕрентнине эсир хăвăр куçăрпа курса ĕненĕр. Тен, сирĕн чун-чĕрĕрсене те Турă хĕлхемĕ тивĕ, вара эсир те хăвăрăн пурнăçăрпа тавралăх тата çывăх çыннăрсемпе ачăрсем çине урăхларах пăхмалли çинчен шухăшлăр. Пирĕн чиркӳ алăкĕсем пуриншĕн те уçă. Сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене Турă пиллетĕр.

**Николай протоиерей, Серафим Саровски чиркĕвĕн настоятелĕ.**

# Çӗре - хресченсене

Районти ял хуçалӑх предприятийӗсене реформӑланӑ май ялта пурӑнакансен вун-вун ыйту çуралать. Чи малтан, çакна мӗншӗн тӑваççӗ тесе ыйтаççӗ ял çыннисем. Çӗр çинче хуçа çук, вӑл пӗрлехи е никамӑн та мар пулса тӑчӗ теме те пулать. Ял хуçалӑх производстви начар тухӑçлӑхлӑ пулнин сӑлтавӗ шӑпах çакӑнта.

Маларахри çулсенче колхозниксене колхоз продукцие сутнипе сутманнине пӑхмасӑрах, ӗç укçине кашни уйӑхра панӑ. Тархасшӑн, кредит ил, патшалӑх парать, çак укçа-тенкӗ продукци туса кӑларма мар, çилпе кӑна вӗçсе кайнӑ пулин те. Çапах вӑхӑт хӑйӗннех тӑвать, рынок çине куçни ял хуçалӑх производствине тӗпренех улӑштарать. Рынокӑн тӗп законӗ: туса илнине сутатӑн - çакӑнпа пурӑнатӑн. Малтанхи пек нимӗн туса кӑлармасӑр, продукци сутмасӑр укçа илесси урӑх пулмӗ ӗнтӗ. Шӑпах çавӑнпа хресченсене çӗр уйӑрса параççӗ. Çӗр çинче пурӑнакан хресченӗн хӑйне тивӗçлине илмелле. Колхозсемпе совхозсем çӗр тата пурлӑх свидетельствисене хӑйсен ӗçченӗсене салатса панӑ. Çӗрпе пурлӑх вара ячӗшӗн çеç ӗçченсен харпӑрлӑхӗ пулса тӑнӑ, анчах хуçалӑхри хутшӑнусем нимӗн чухлӗ те улшӑнман. Коллектив харпӑрлӑхӗ уйрӑм çынсене куçман. Кунта эпир реформӑлассин иккӗмӗш тапхӑрӗ патне çитсе тӑтӑмӑр - йӗркелӳ формисене суйласси. Ку тӗлӗшпе район ертӳçисем пурнӑçланма пултаракан хӑть хӑш формӑпа та килӗшеççӗ. Кооперативсен "Москва", "40 лет Победы", "Тан", "Киклӗ", Мичурин ячӗпе хисепленекен ассоциацийӗсем, фермерсен хуçалӑхӗсем - пурӗ 9 - çакӑн пек коллективсем йӗркеленин тӗслӗхӗсем пулса тӑраççӗ. Хресченсен хуçалӑхӗсен хӑть хӑш ассоциацийӗнче те кооперативсем, юлташлӑхӗсем, хресченсен хуçалӑхӗсем йӗркелеме пултараççӗ. Харпӑрлӑхçӑ хӑйӗн çӗрӗпе тата пурлӑх пайӗсемпе хӑй усӑ курма пултарать. Мӗнле пурӑнасси пирки хресченсен хӑйсен шутламалла. Хальхи вӑхӑтра чи лайӑх форма вӑл - куçӑмлӑ пысӑках мар коллективсем йӗркелесси, кунта 15-20 пуçаруçӑ-çын кӗрет. Вӗсемпе ӗçлес текенсем тара илме договорсем тӑваççӗ. Харпӑрлӑхçӑ çак коллективпа договор çырма, фермер патне куçма е урӑх çул-йӗр суйласа илме пултарать. Анчах пӗрпӗрин хушшинчи çыхӑнусене килӗшсе татӑлса çирӗплетмелле.

Коллектив ял хуçалӑх кооперативӗ е юлташлӑх йӗркелеме калаçса татӑлнӑ пулсан, чи малтан ӗçе йӗркелеме тата ертсе пыма пултаракан лидера суйламалла. Кооперативӑн учредительнӑй пухӑвне ирттермелле, устав çирӗплетмелле. Кооператив членӗсем хӑйсен çӗр тата пурлӑх пайӗсене ял хуçалӑх кооперативӗн пай фондне параççӗ, хӑйсен пайне пай фондне пани çинчен договор тӑваççӗ. Хӑйсен пайӗсене тара паракан харпӑрлӑхçӑсем, пенсионерсем, учительсем, культура ӗçченӗсем тата ыттисем те хӑйсен çӗр тата пурлӑх пайӗсене тара пани çинчен договорсем тӑваççӗ. Çак договорсене районти çӗр комитетӗнче регистрацилеççӗ.

Фермер хуçалӑхӗ йӗркелес текенсем хресченсен хуçалӑхӗсен ассоциацийӗнчен тухни çинчен тата вырӑнти самоуправленин Советне çӗр участокӗ уйӑрса пама ыйтса, фермер хуçалӑхӗн составне тата ӗçӗ-хӗлне палӑртса заявленисем çыраççӗ. Вырӑнти самоуправленин Совечӗ çӗр участокӗ уйӑрса парасси çинчен халӑх депутачӗсен пӗрлештернӗ Советне хыпарлать. Совет фермер хуçалӑхӗ йӗркелеме çӗр участокӗ уйӑрса парас ыйтӑва татса парать. Вырӑнти самоуправленин Совечӗсем граждансем 18 çул тултарсан çӗр пайӗ илме свидетельствосем парать. Хуçалӑхри яланхи ӗçченсем, хуçалӑх пенсионерӗсем, ялти социаллӑ сферӑра ӗçлекенсем, вӑхӑтлӑха урӑх çӗрте пурӑнакансем (çар çыннисем, студентсем тата ыттисем те) çӗр пайӗ илме пултараççӗ. Çӗр пайне халалпа килӗшӳллӗн еткере хӑварма пулать. Халал пулмасан çӗр пайӗн еткерçисене вӑйра тӑракан законпа палӑртаççӗ. Еткерçӗсем пулмасан, çӗр пайӗ кашни хуçалӑхрах йӗркеленӗ çӗнӗрен валеçекен фонда куçать. Кунсӑр пуçне, йышӑнман çӗр пайӗсем юлма пултараççӗ, вӗсене ял хуçалӑх кооперативӗсене параççӗ, кооперативсем вӗсемпе виçӗ çул хушши усӑ курма пултараççӗ. Ку вӑхӑт хушшинче çак çӗр пайӗн хуçи свидетельство илме заявлени памасть тата çӗр пайӗпе усӑ курма шутламасть пулсан, вӑл ял хуçалӑх кооперативӗнче юлать.

Çакна уйрӑммӑн палӑртатпӑр: харпӑрлӑхçӑсем хӑйсен çӗр пайӗсене договор туса çеç параççӗ. Тин йӗркеленӗ кооперативсен ертӳçисен шӑпах çак ӗçе пурнӑçламалла.

Питӗ шел, çапах та хӑш-пӗр ертӳçӗсем çакна тимлӗх уйӑрмаççӗ. Кооператив е ял хуçалӑх предприятийӗ çӗр пайӗсене тара илни е предприятин устав фондне пани çинчен договор тумасть пулсан, продукцие ют çӗр çинче туса илнӗ пек пулса тухать. Ку çӗр законне пӑсни пулать. Çӗр пайне тара пани çинчен договор тусан, предприятин пай хуçине мӗнпе те пулин тӳлемелле - тырӑ, утӑ пама, урӑхла пулӑшма пулать.

Хӑйсен çӗр пайӗсене предприятин (кооперативӑн) устав фондне паракансем çак предприяти членӗсем шутланаççӗ тата çӗр пайӗн суммин кашни тенки пуçне дивидендсем илеççӗ.

Договорсене икӗ экземпляр çыраççӗ, вӗсенчен пӗрне çӗр пайӗн хуçине параççӗ, тепри свидетельствӑпа пӗрле предприяти (кооператив) ертӳçинче юлать. Уйӑрса панӑ çӗр çинче пӗр ертӳçӗ те договор тумасӑр ӗçлеме пултараймасть. Пирӗн пата, çӗр комитетне, çынсем час-часах çак ыйтусемпе килеççӗ: хуçалӑх договорсем тумасть, тӑвать пулсан та договор обязательствисене пурнӑçламасть.

Çак ыйтусене пурне те çӗр комитечӗ çирӗп тӗрӗслесе тӑрӗ. Мерӑсем йышӑнӗ, ӗçсене суд органӗсене те пама пултарӗ.

Хирти çурхи ӗçсем тытӑниччен договорсем туса пӗтерес задача лартнӑ.

Ял хуçалӑх предприятийӗсенче свидетельствӑсем хатӗрлесе панисӗр пуçне, çӗр комитечӗ Тутарстан Республикин çӗр кодексӗпе (23-мӗш статья) килӗшӳллӗн уйрӑм çӗр илме, ӗмӗрлӗхе еткере хӑварма, унпа яланах усӑ курма ирӗк паракан патшалӑх акчӗсене парать. Ку акта çаксене параççӗ.

- ял хуçалӑх производстви валли çӗр участокӗсем уйӑрса панӑ предприятисемпе учрежденисене, организацисене;
- уйрӑм хушма хуçалӑх, сад йӗркелеме, çурт, гараж тума, урӑх тӗллевсемпе çӗр участокӗсем уйӑрса панӑ граждансене.

Çӗр участокӗсен свидетельствисене ялсенчи инвентаризаци даннӑйӗсемпе килӗшӳллӗн патшалӑх акчӗпе улӑштармалла. Ертӳçӗсемпе граждансен хӑйсен çӗр участокӗсем тӗлӗшпе кӗске вӑхӑт хушшинче çӗнӗ свидетельствӑсем çырмалла, çӗрпе уйрӑммӑн усӑ курма ирӗк паракан патшалӑх актне илмелле.

Çӗр илессипе çыхӑннӑ ыйтусемпе çӗр комитетне пымалла. Адрес: Советская урамӗ, 119, телефонсем: 2-14-37, 2-18-32.

**А.ШАЯХМЕТОВ,**
**çӗр ресурсӗсемпе тата çӗр реформи тӗлӗшпе ӗçлекен район комитечӗн председателӗ.**

## Паспорт... культура çурчӗ валли

Хулари тата районти мӗнпур культура çурчӗсем, ялсенчи 58 клуб, 47 библиотека тата ытти культура учрежденийӗсем çӗнӗ паспортсем илӗç. Унта даннӑйсем нумай çырнӑ. Хӑçан ӗçлеме тытӑнни, калӑпӑшӗпе лаптӑкӗ, клубра миçе куракан вырӑн, унӑн хакӗ, кивелнин процентӗ, тӗп хатӗрсен характеристики, шыв, ӑшӑ, пӗтӗм финанс кӑтартӑвӗсем - халӗ çаксене пурне те клуб тата библиотека паспортӗнчен пӗлме пулать. Çак ӗç Тутарстан Республикин культура Министерстви кӑçалхи февралӗн 17-мӗшӗнче йышӑннӑ 36-мӗш номерлӗ приказпа март уйӑхӗнче пуçланнӑ. Вӑл апрель уйӑхӗнче вӗçленӗ.

Хулари ачасен библиотекинче нихçан та пушӑ пулмасть. Каникул кунӗсенче унта уйрӑмах халӑх йышлӑ. Акӑ хальхинче те шӑп çав кунсене ятарласа хатӗрленӗ "Ача-пӑча кӗнекин эрни" вӗçленчӗ. "Юратнӑ геройсем патне хӑнана" - çапла ят панӑччӗ туптарусенчен, музыка конкурсӗсемпе викторинӑсенчен тӑракан тата мероприятисен серине уçнӑ вӑййа. Иккӗмӗш куна тутар поэчӗ тата прозаик Фанис Яруллин çуралнӑранпа 60 çул çитнине халалланӑччӗ - литература композицине хатӗрленӗччӗ, ачасем юбилярӑн сӑввисене каларӗç. Кӗнеке вулама юратакансене "Асамлӑ ырçа" фольклор уявӗ пуçтарчӗ, унта туптарусене, ваттисен сӑмахӗсене аса илчӗç, юратнӑ халӑх вӑййисене хутшӑнчӗç, такмаксем тата сӑпка юррисем шӑрантарчӗç, сӑмавартан чей ӗçрӗç. Çӗнтерӳçӗсем "тутлӑ" парнесем илчӗç. Мартӑн 27-мӗшӗнче "Маруся", "Между нами, девочками" журналсен страницисем тӑрӑх çӳлçӳрев иртме библиотекӑра аслӑ классенче вӗренекен хӗрачасем пуçтарӑнчӗç. Мода, макияж, апат çиме сӗтел хатӗрлесси - усӑллӑ та кирлӗ калаçу теми пулчӗ. Тепӗр кун А.С.Пушкинӑн юмахӗсем тӑрӑх литература турнирӗ пулчӗ, мартӑн 30-мӗшӗнче вара - С.Михалковӑн творчестви тӗлӗшпе калаçу. "Ача-пӑча кӗнекин эрни" кулӑш кунӗнче вӗçленчӗ, унта шӳтлерӗç, савӑнтаракан историсем, анекдотсем нумай каларӗç.

## Викторинӑсем, вӑйӑсем, турнирсем...

## Тӳрӗ кӑмӑллӑ ӗçчен

*В.Илларионов строительство техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ хыççӑн выльӑх-чӗрлӗх пӑхакан пулса ӗçлеме тытӑннӑ. Акӑ виçӗ çула яхӑн ӗнтӗ вӑл хресченсен хуçалӑхӗсен "Элмет" ассоциацийӗнче сӗт-çу тата сурӑх фермисен заведующийӗ пулса вӑй хурать. Владимир хӑйӗн ӗçӗн вӑрттӑнлӑхӗсене пӗлсе çитнӗ ӗнтӗ, çак яваплӑ ӗçе шанчӑклӑ пурнӑçлать. Фермӑри мӗнпур ӗçе лайӑх пӗлни ӑна çак тивӗçе тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑçлама, тӗрӗслесе тӑма пулӑшать. Çапла майпа, вӑл пӗлтӗр районта иртнӗ дояркӑсен конкурсне хутшӑнма тивӗç пулнӑ. Пирӗн фотокорреспондент Н.Азизов ӑна шӑп кӑна çав вӑхӑтра ӳкерсе илнӗ.*

*Заведующийӗн чи кирли вӑл - коллективра çирӗп дисциплина пулни тата палӑртнӑ тӗллеве пурнӑçлама ӗçченсен вӑйне пӗтӗçтересси.*



*Ӳкерчӗкре: ферма заведующийӗ В.И.Илларионов.*

## Калараш̆сем

Хуçи мĕнле, лаши çапла.

Чăхă пĕчĕккĕн сăхсах тăранать.

Чее тилĕ те читлĕхе лекет.

Чĕкеç куна тапратать, шăпчăк пĕтерет.

Чĕкеçĕн хӳри юплĕ, çĕленĕн чĕлхи юплĕ.

Чĕмсĕр йытă чĕп тытнă.

Шапа та хăй кӳллине мухтать.

Шăнкăрчă та шăпчăк пек шăхăрма пĕлет.

Шăши ылханĕ кушака çитмест.

Шухă лаша час ватăлать.

Ыраш уламĕ çиекен лаша ыраш уламĕ турттарма анчах.

Хăна юррисем

## Самартан туянтăм сар лаша

Чĕмпĕртен те илтĕм, ай, чĕн йĕвен,
Самартан туянтăм сар лаша.
Сар лашана йĕвен тăхăнтартса,
Хапха умне килтĕм çавăтса.

Тухса пăх-ха, атте, çав лашана,
Килет-и кăмăлна сар лаша.
Çав лаша кăмăлна, ай, килсессĕн,
Эп те килĕп санăн кăмăлна.
Çав лаша кăмăлна килмесессĕн,
Эп те килмĕп санăн кăмăлна.

Хăмăшлăхра çĕлен, ай, шăхăрать:
Хура çĕлен хушать шăхăрма.

Юрлать, ташлать тесе, ай, ан калăр:
Ватсем хушаç юрлама, ташлама.

Сиктĕрмеллĕ урапа, сăран кӳме,
Хыçĕсенчен тусан тухминччĕ.
Эпир кунта килни нумай пулать
Пирĕн хыçран сăмах тухминччĕ.

Улшут учĕсенĕн ури сакăл -
Савăнать пуль ватă улшучĕ.
Ырă çын ачисен чĕлхи çемçе -
Савăнаç пуль ашшĕ-амăшĕ.

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.

## Техосмотр çĕнĕлĕхĕ



1998 çулта техосмотр irttermelli условисем кăшт улшăннă. Нурлат районĕнче пуçланнă техосмотр вăхăтĕнче транспорт хуçисен февралĕн 1-мĕшĕнчен çакăн пек требованисене пурнăçламалла. Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ çумĕнчи çулпа çӳрессин хăрушсăрлăх комиссийĕн 1997 çулхи мартăн 31-мĕшĕнчи Постановленине тĕпе хурса, автотранспорт хатĕрĕсен техника шайне тĕплĕн тата паха тĕрĕслес тĕллевпе Гиматдинов ячĕпе хисепленекен урамра "Сельхозтехника" бази çинче Нурлат ГРОВД ОГАИ диагностика станцине йĕркеленĕ. Малтан диагностика ĕçĕсемшĕн 42 тенкĕ тӳлемелле, кайран вара ОГАИе кайма направлени илмелле те çак станцире тĕрĕслев иртмелле. Çак ĕçсемшĕн Нурлатри "Татарстан" банк уйрăмĕнче, БДД Нурлатри фончĕн субсчечĕ çине 40603810662300100005 номерпе (иккĕмĕш чӳрече) тӳлемелле.

Çапла майпа, сывлăша наркăмăшлантарманни çинчен калакан талона тата автомобиле техосмотр irttermelli диагностика карттине алла илнĕ, çаплах техосмотршăн тата çулшăн тӳленĕ хыççăн техосмотр иртме ОГАИе кайма пулать.

**Г.ГИМАЛТДИНОВА.**

Мартăн 27-мĕшĕнче 11 сехетре апат-çимĕç комбиначĕн территорийĕнче нефть турттаракан КамАЗ автомашина сирпĕнсе кайнă. Взрыв сăлтавĕ - нефть турттаракан машинăн емкоçне тивĕçлипе çуса чӳхе-

## Асăрханакана турă сыхлать

месĕр тата пăслантармасăр шăратса çыпăçтармалли ĕçсене пурнăçланă чухне пушартан сыхланмалли правилăсене хытă пăсни. Кĕскен каласан, тен, нимех те пулмĕ тесе шаннă. Анчах шанăç тӳрре тухман. Взрывпа емкоçăн хыçалти виттине апат-çимĕç комбиначĕн общежитийĕ хыçне 100 метра сирпĕтнĕ. Автомашинăна хута яма çăмăл пулмĕ, водительпе сварщик ӳт-пӳ енчен суранланнă тата пиçнĕ.

## ГАИ консультацийĕ

ГАИ практикинче машинăна урăх çынна шанса панине час-часах тĕл пулатăн. Нотариус çирĕплетмен доверенность та халь законпа килĕшӳллĕн вăйра тăрать. Унта машинăн пĕтĕм даннăйĕсене, ăна шанса панă çыннăн паспорт даннăйĕсене кăтартмалла. Доверенноçра çаплах ăна мĕнле срока панине палăртмалла.

Анчах кунта тата тепĕр вăрттăнлăх пур - эсир машинăна урăх çынна шанса патăр, анчах та сирĕн мĕнле шанăç юлать? Машина хуçин аварирен, машинăна вăрласран мĕнле те пулин документ пулсан, аван пулмалла ĕнтĕ. Кун пек тăвас тесен доверенноçри даннăйсене кăтартса автомобиле вăхăтлăха усă курма илни çинчен расписка çырмалла. Распискӑра автомашинăн хакне кăтартсан тата та лайăхрах пулать.

Расписка нотариус патĕнче çирĕплетмелле мар. Вăл судра законлă пулать.

**Г.ГИМАЛТДИНОВА.**

## Сывлăшри пысăк вольтлă электропередача линийĕсем

хуласемпе районсенчи промышленность, ял хуçалăх предприятийĕсене электроэнергипе тивĕçтерессĕ. Çак линисене сиенлени халăх хуçалăхне сиен кӳрет, инкек-синкек, пушар патне илсе çитерет. Сывлăшри 1000 ытла вольтлă электропередача линийĕсене сыхлассин правилисем пысăк вольтлă линисен икĕ енĕпе вунă метртан тытăнса вăтăр метра çити сарлакăш сыхлав зонисем тумаллине палăртнă.

Сыхлав зонисенче электросеть предприятийĕсемпе çырса килĕшӳ тумасăр пысăк вольтлă электролинисем патĕнче юрамасть:

- строительство, тĕплĕ юсав ĕçĕсем пурнăçлама, çурт-йĕре реконструкцилеме е пăсма;
- тиев ĕçĕсем пурнăçлама, çĕр чавма, йывăçсем касма е лартма, хирти стансемпе выльăх картисем тума;
- çулпа пĕрлехи çӳллĕшĕ 4,5 метр ытла машинăсемпе механизмсем иртсе çӳреме.

Электросетьсене кирлĕ пек ĕçлеме чарма, сиенлеме е инкек-синкек патне илсе пыма пултаракан ĕçсем тума **юрамасть**, сăмахран:

- сыхлав зонисенче автозаправка станцийĕсем вырнаçтарма;
- электросеть объекчĕсем патне пымалли е кĕмелли çулсене хуплама;
- пралуксемпе тĕревсем çине кирлĕ мар япаласем ывăтма, тĕревсем çине хăпарма;
- сыхлав зонисенче е вĕсен сывăхĕнче çӳп-çап купалама;
- сыхлав зонисенче выльăх апачĕ, улăм, вутă тата ытти япаласем хума, вут чĕртме.

Сывлăшри электропередача линийĕсем лайăх ĕçлеменнине пула нумай çĕре электроэнерги çитмест, чылай вăхăт хушши çутă пулмасть.

Линисем сиенленни электросетьсене, халăх хуçалăхне сиен кӳрет, çаплах çынсемпе выльăх-чĕрлĕх пурнăçне, ял хуçалăх ĕçченĕсене инкек-синкек патне илсе çитерме пултарать, пушар сăлтавĕ пулса тăрать.

Мĕнпур техникăпа механизм хирти çурхи ĕçсене пурнăçлама тухнă вăхăтра электролинисене сиенлетессинчен, инкек-синкекрен сыхланма хуçалăхсен ертӳçисене электропередачăсен СЫХЛАВ ЗОНИСЕНЧЕ хăрушсăрлăх техникине тытса пымалли çинчен механизаторсемпе водительсене аса илтерме ыйтатпăр.

Электролинисем, трансформатор подстанцийĕ йĕркеллĕ ĕçлеменнине асăрхасан çавăнтах подстанцие 2-25-24 е 2-13-98 номерлĕ телефонсемпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр.

**НРРЭС АДМИНИСТРАЦИЙĔ.**


## Пĕлтерӳсем

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 сутăнать. Адрес: К. Маркс урамĕ, телефон: 5-32-61, 16 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Мансардăллă кирпĕч çурт сутăнать (шалти ĕçсене туса пĕтермен), вариантсем пулма пултараççĕ. Адрес: Московская урамĕ, 5-36.*

* * *

*"Волга" ГАЗ-24 автомобиль сутăнать. Телефонсем: 5-18-55 (килти), 2-27-43 (ĕçри).*

* * *

*Некрасовка поселокĕнчи дача участокĕ сутăнать. Чапаев урамĕнчи 20-мĕш çуртра ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*"МИФ" (автозапчасти) магазин "афган" поселокĕнчен Куйбышев урамĕнчи 88-мĕш çурта куçнă. Сутлăхра: ВАЗ, КамАЗ, УАЗ автомашинăсен запас пайĕсем, çумалли хатĕрсем.*

* * *

*61-мĕш номерлĕ шкул Мунира Хусаиновна Байбулатова ячĕпе панă 872487 номерлĕ вăтам пĕлӳ çинчен калакан аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

*Туса пĕтермен 12х6 метрлă хырă çурт мĕнпур материалĕпе пĕрле сутăнать. Тăрри, çамки, маччи хатĕр. Адрес: Кăрмăш поселокĕ, Дружба урамĕ, 14.*

* * *

*ВАЗ-21013 автомобиль сутăнать. Адрес: Л.Толстой урамĕ, 15.*

* * *

*Хуралтăсемлĕ çурт сутăнать, сад, пахча, газ, шыв пур. Чиешнери Владимир Малининран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Шупашкар хулинчи 9 хутлă çуртăн 5-мĕш хутĕнчи çĕнĕ планировкăллă 3 пӳлĕмлĕ хваттере (66 тăваткал метр) сутатпăр е Нурлат хулинчипе улăштаратпăр. Посредник телефонĕ: 5-20-72.*

* * *

*ВАЗ-21065 автомашина васкавлă сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-16-58.*

* * *

*Нурлат райповĕн коопзаготпромĕ халăхран, организацисемпе учрежденисенчен макулатура йышăнать (килограмĕ 0-20 пус).*

*Халăхран аш-какай сутăн илет:*

*ĕне выльăх ашĕ, I категори - 1 килограмĕ 10 тенкĕ; II категори - 1 килограмĕ 9 тенкĕ;*

*сысна ашĕ, I,II,III категорисем - 11 тенкĕ; IV категори - 10 тенкĕ.*

*Апат-çимĕç пасарĕнчи "Ял хуçалăх продукчĕсем" 4-мĕш номерлĕ магазинта е Коопзаготпромăн выльăх-чĕрлĕх продукцийĕн складĕнче ыйтса пĕлме пулать.*

* * *

*Хула варринчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттере икĕ пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Телефонсем: 2-28-57 е 2-10-78.*

* * *

*Тукай урамĕнчи 41-мĕш номерлĕ çурта тара паратăп. Телефон: 5-14-00.*

* * *

### "Техника" - Сире валли

*Холодильниксем, кĕпе-йĕм çумалли машинăсем, газ плитисем сутатпăр. 1998 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кредитпа е маларах тӳлесе хурса туянма пулать. Килĕр, Сире "СТИНОЛ", "ИНДЕЗИТ", "АРДО", "АРИСТОН", "НОРД" кĕтеççĕ.*

*Сире хăрушсăрлăх, çăмăллăн усă курмалли, нумай çул хушши ĕçлекенни тата хитрелĕх кирлĕ пулсан, пирĕн пата килĕр. Тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан телевизорсен 15 ытла моделĕ (1200 тенкĕрен пуçласа 4000 тенкĕ таран), микроволновăй кăмакасем, пылесоссем, чейниксем, радиотелефонсем. Эпир сире валли ĕçлетпĕр. Гаранти пур. Пысăк калăпăшлă техникăна районти ялсене тӳлевсĕр леçсе паратпăр.*

*СНГ хулисене "КамАЗ" автомашинăпа тиевсене кирлĕ çĕре çитеретпĕр. Пирĕн адрес: "Техника" магазин, 2-мĕш хут, телефонсем: 2-14-30, 2-21-02.*



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ:** редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.